26-66

ЕВКУР

# КОМСОМОЛЕСӐН ТУМАЛЛИ ӖҪӖСЕМ

ҪӐВАШ КӖНЕКИ УЙРӐМӖ

ШУПАШКАР ▪ ▪ 1926

Пĕтĕм тĕнҫери пролеттарисем, пĕрлешĕр!

ЛЕВКУР

# КОМСОМОЛĔСĂН ТУМАЛЛИ ĔҪĔСЕМ

## (ОБЯЗАННОСТИ КОМСОМОЛА)

КУРИЙ ТИТОВ куҫарнă

Ретактăрĕ Х. С. СТЕППАНĂВ.

ҪĂВАШ РЕСПУПЛĔКĔНҪИ КĔНЕКЕ КĂЛАРАКАН УЙРĂМ

ШУПАШКАР — 1926 ç.

Чебоксары, типография
Шкоы Ф.З.У. ири Чуваш-
——— госиздате ———
Чувашлит № 86. Зак. № 70
—— Напеч. 3000 экз. —-

## КОМСОМОЛЁСӐН ТУМАЛЛИ ӖҪЁСЕМ.

### Комсомола мӗншӗн кӗреҫҫӗ?

Комсомолра тӑман ҫамрӑксенҫен вӗсем, комсомола кӗнӗ ҫух, есӗ комсомола мӗншӗн кӗретӗн, тесе ыйтсасӑн вӗсем ҫас-ҫасах тӗрӗс ответ параймаҫҫӗ. Ҫас-ҫасах вӗсем: «епӗ комсомола вӗренме кӗретӗп» тесе, йе тата «епӗ комсомола ваттисене улӑшӑнтарма кӗретӗп» тесе калаҫҫӗ. Анҫах уипек калани—пирвайхи те, иккӗмӗшӗ те лайӑх шутласа илсессӗн пит тӗрӗсех мар, вӑл акӑ мнӗшӗн. Вӗренес пулсассӑн комсомолта анҫах мар вӗренме пулаť. Вӗренессине ӑна шкулсенҫе те фапсавуҫра*) та вӗренме пулаť. Фапсавуҫра комсомолта вӗрентменнисене те вӗрентеҫҫӗ. Унта тӗрлӗ ӑслӑлӑха та, политтиккӑна та вӗрентеҫҫӗ. Кунта вӗрентнисене пурне те комсомолра ӗҫленипе ҫеҫ вӗренме пулмасť. Ҫапла вара,

*) Фапсавуҫ—хапрӑк-савӑтри ҫамрӑксен шкулӗ. Кунта ҫамрӑксене вӗреннӗ ӗҫе аван пӗлекен ӗҫлекенсем пулма вӗрентеҫҫӗ. Малалла ӑна епӗр, кӗнекере вырӑн нумай йышӑнса тӑрасран, кӗскен «фапсавуҫ», тийӗпӗр.

комсомолра есӗ мӗне вӗренес тетӗн, тесе ыйтсассӑн ӑна хирӗҫ ҫакна кӑтартса памалла. Комсомол орканисатсинче тӑракан йулташсем вӗсем, пуринчен малтан, комунисӑн парттине йурӑхлӑ членсем пулма вӗренеҫҫӗ.

Малтанхи пек, епӗ комсомолра ваттисене улӑштарма хатӗрленетӗп, тени, вӑл нимӗнех те пӗлтермест-ха. Мӗнле ҫынна улӑштарма хатӗрленетӗн? Улӑшу (сменӑ) вӑл тӗрлӗ пулма пултарать. Сӑмахран каласан, хӗвел анӑҫӗнчи патшалӑхӗсенче меншевиксем халӗ те вӑйлӑ ҫӗрте, вӗсен ҫамрӑксен орканисатсийӗсем хӑйсен пур. Вӑл «ҫамрӑксен канашӗ» йатлӑ. Ҫак орканисатси те улӑшу (сменӑ) хатӗрлеме тӑрӑшать. Анчах кама улӑштарма-ши? Комунниссен парттинче тӑраканӗсене улӑштарма мар ӗнтӗ, вӗсем меншевиксен парттийӗ валли, меншевиксене улӑштарма вӗрентеҫҫӗ.

Хӗвел анӑҫӗнчи пуршуаҫин те хӑйсен пуршуаллӑ ҫамрӑксен орканисатсийӗсем пур. Кунта вара пуршуаллӑ парттисенче тӑракансене улӑштарса пыма хатӗрленеҫҫӗ ҫамрӑксем. Ҫавӑнпа та, парттире тӑман ҫамрӑк ӗҫлекенсем комсомола кӗнӗ чух, вӗсенчен: «есӗ мӗнле класӑн, йе мӗнле парттин улӑшӑвӗ (сменӑ) пуласшӑн?» тесе ыйтсассӑн, вӗсем

пурте: «епӗ комуниссен парттин улӑшӑвӗ пуласшӑн», тесе калаҫҫӗ. Кун пек калани тӗрӗс ответ пулаҭ, ҫавӑнпа малтанах ҫапла каламалла пулнӑ.

Ӗҫлекенсен ҫамрӑкӗсем комуниссен парттин ҫаплӑ йурӑхлӑ ҫленӗсем пулма вӗренме комсомола кӗреҫҫӗ. Куна ӑсра лайӑх тытса тӑмалла. Анҫах комуниссен парттин йурӑхлӑ ҫленӗ пулма йепле вӗренмелле-ши?

**Комсомолӗспа парттире тӑман ҫын.**

Акӑ ӗнтӗ есӗ комсомола кӗтӗн. Анҫах, комсомолӗспа парттире тӑман ҫамрӑк хушшинҫе мӗнле пӗр пек марлӑх пур-ши? Санӑн комсомолра тӑнӑ ҫухнехи пурӑнӑҫупа комсомола кӗреҫҫенхи пурӑнӑҫу хушшинҫе мӗнле пӗр пек марлӑх пур? Комсомолра тӑракан ҫамрӑк, комсомолра тӑманнинҫен акӑ ҫакӑнпа уйӑрӑлса, урӑхланса тӑраҭ. Ҫи малтан комсомолӗс, хӑйӗн орканисатсийӗн ҫленӗ пулса тӑнипе, орканисатси хушнӑ ӗҫсене, ҫав кӑтартнӑ пек туса пыраҭ, комсомолӑн сатаҫҫисене пурне те пурӑнӑҫа кӳртсе пыма тӑрӑшаҭ. Ҫак ӗҫре, вӑл комуниссен парттин йурӑхлӑ ҫленӗ пулма вӗренет.

Комсомолӗсӑн, уйрӑм правасем-тивӗҫлӗхӗсем ҫук, тивӗҫлӗхӗсем комсомолра тӑман

çамрăксен те, тăраканнисен те, пĕр пекех. Комсомолра тăнăшăн комсомолĕса укçа-шалу памаççĕ. Комсомол, вăл хăйен оркanисатсинҫе тăракан çамрăксен пурăнăçне çеç мар, вăл сойусра тăман ĕçхалăхĕн çамрăкĕсен пурăнăçне пуррине те лайăхлатасшăн тăрăшаҫ. Сăмахран каласассăн хуласенҫе фапсавуҫ шкулĕсене уçнă ҫухне епир, вĕсене комсомолĕссемшĕн çеç мар, сойусра тăман çамрăксемшĕн те, тесе уçатпăр. Çавăн пекех, тĕрлĕ крушоксене, шкулсене, епĕр комсомолĕссене анҫах мар, ытти ĕçхалăхĕн çамрăкĕсене те йаратпăр. Çапла ĕнтĕ, комсомолĕссен комсомолра тăман çамрăксенҫен уйăрăм тăракан тивĕçлĕхĕсем çук. Анҫах комсомолĕсăн тумалли ĕçĕсем комсомолра тăман çамрăксеннинҫен нумайрах, комсомолĕссен вĕсен ахаҫ çамрăксем туман ĕçсем те ҫылай. Çакăнта епир çав ĕçсене пăхса тĕплесе тухăпăр.

**Мĕн вăл комсомолăн йĕркелĕхĕ (тистсиплинă)?**

Комсомолра тăман çамрăксем нумайĕшĕ комсомол тистсиплинĕнҫен (йĕркелĕхĕнҫен) хăраса, комсомол ĕçĕсене тăвассинҫен хăраса çеç, комсомол оркanисатсийĕсене кĕмеççĕ. Вĕсем акă çакăн пек шухăшлаççĕ: «Мĕне

кирлӗ мана хам ҫине ытлашши ӗҫ илме, пӗрмайах сопранисене тӗрлӗ крушоксене ҫӳреме, тата унта хушнӑ ӗҫсене туса пыма. Хам шухӑшланӑ пек хама хам хуҫа пулса ӗҫлесессӗн, йе хам шухӑш тытсассӑн, кунӗпех уҫӑлса, канса ҫӳреме авантарах пулӗҫке. Мӗншӗн кӗрес-ха манӑн комсомола?» теҫҫӗ. Ҫавӑн пек шухӑшлакан йулташсем, вӗсем акӑ ҫакӑн патнелле пыраҫҫӗ: хам мӗн шухӑшлатӑп ҫавӑна тӑватӑп, ытти ҫамрӑксем кирек мӗн ӗҫлеҫҫӗр унта манӑн ӗҫ ҫук. Йе вырӑссем каланӑ пек каласассӑн, «моя хата с краю, я ничего не знаю» тени пулаҭ. Комсомол орканисатсийӗнҫе ун пек мар. Есӗ комсомола кӗнӗ пулсассӑн, есӗ хӑвӑн ҫине тӗрлӗ паллӑ ӗҫсем илетӗн, ху ӗҫӳсемшӗн кӑна мар, мӗн пур ху тӑракан орканисатси ӗҫӗсемшӗн те сӑмах тытатӑн. Ҫав вӑхӑтрах, тата пӗтӗм комсомол та санӑн ӗҫӳсемшӗн, есӗ мӗнле пурӑннисемшӗн сӑмах (ответ) тытаҭ. Пирӗн орканисатсинҫе тӑракан уйӑрӑм комсомолӗссем: «хӑвӑр тӑвас тенӗ пек тӑвӑр, манӑн унта ӗҫ ҫук, крушоксене те, кӗрес тесессӗн кӗрӗр, анҫах епӗ кӗместӗп,» тесе калама пултараймаҫҫӗ. Ун пек калаканнисем, вӗсем вара комсомолӗссем мар, пулаҫҫӗ. Парттипе сойус

хушнă ĕçсене туса пынине тата çак каланă ĕçсене пурăнăçа кӳртсе пынине, епĕр комсомолăн йĕркелĕхĕ (тистсиплинă) тетпĕр. Есĕ комсомола кĕретĕн пулсассăн, санăн комсомол йĕркелĕхне хытă тытса тăмалла, оркани-сатси хушнă ĕçсене пурне те туса пымалла

**Комсомол сатаӆӆи—вăл комунисăм тăвасси.**

Анӆах, çакăн пек йĕркелĕх (тистсиплинă) мĕншĕн кирлĕ-ши?—Вăл ĕçлекен çамрăкĕсене лайăхрах органисатсилеме, пĕрлештерме кирлĕ. Комсомол умĕнӆе мĕнле сатаӆӆăсем тăраç-çĕ-ха? Комсомол хăйĕн умĕнӆе пĕр тĕп сатаӆӆă тытаť. Çак сатаӆӆă пирĕн комуниссен парттин тĕп сатаӆӆипе пĕр пекех. Ку сатаӆӆă,—пĕтĕм тĕнӆипе капитталисăм тытăмне пĕтерсе çĕнĕ пурнăç, комунисăм опӆăстви тăвасси. Çавăнпа пирĕн комуниссен парттине хирĕç пĕтĕм тĕнӆери пуршуаçи ĕçлет, йалсемпе, хуласенӆе суту-илӳ тăваканĕсемпе кулаксем те пире хирĕç ĕçлеççĕ. Тата комуниссен парттине хирĕç пирĕн авалтан йулнă йăласемпе кивĕ пурнăçăн йĕркисем пыраççĕ. Вĕсем халĕ те хăш-хăш хресӆенсемпе хаппăк-савăтра ĕçлекенсен хушшинӆе йулнă-ха. Куна епир аван пĕлетпĕр. Çак кивĕ пурнă-

ҫӑн йӗркисемпе, тата авалтан йулнӑ йӑласемпе кӗрешме ҫӑмӑлах мар. Ҫавӑнпа та ӗҫлекенсем, пӗр-пӗринпе ҫирӗп ҫыхӑнса тӑмасассӑн, вӗсем орканисатсиленмесессӗн, тата ҫав орканисатсисене кӗрекеннисен хушшинҫе ӗҫе кирлӗ пек уйӑрса пымсассӑн, епир вӑйсӑр пулатпӑр, пуршуаҫи пирӗнтен вӑйлӑрах пулӗ те, вӑл вара пирӗн ӗҫлекенсен Респупликне ҫасах пӗтерме пултарӗ. Пуршуаҫипе лайӑх кӗрешес, ӑна пӗтерес тесессӗн, тата пирӗн Раҫҫейри ӗҫхалӑхӗн ирӗкне хӑй аллинҫе хӑварас тесессӗн, ӗҫлекенсен пурин те пӗрлешмелле, комуниссен ҫирӗп парттине кӗмелле. Ӗҫлекенсем нумайӗшӗ, куна пӗлҫӗҫӗ. Ҫак сӑмахсем ҫамрӑксемшӗн те пулмалла. Комуниссен парттийӗн йурӑхлӑ ҫленӗсем пулас тесессӗн, ҫамрӑксен куна пӗҫҫен, уйӑрӑмӑн тума йурамасӗ. Орканисатсине кӗрсе, унӑн йӗркелӗхне хытӑ тытса, комсомол хушнӑ ӗҫсене пурне те туса, малашнехи тата пысӑкрах ӗҫсене тума хатӗрленнипе ҫеҫ, ӗҫлекен ҫамрӑкӗсем сӑмахпа ҫеҫ мар, ӗҫӗсемпе те партткне йурӑхлӑ ҫленсем пулма пултараҫҫӗ. Ҫавӑн пек пулас тесессӗн, кунсемсӗр пуҫне тата ҫамрӑксен, пӗрлешсе партти ӗҫӗсенҫе, канашсен ӗҫӗнҫе профсойуссенҫе тата ытти

орканисатсисенҫе ёҫлемелле. Ака мĕншĕн комсомолăн йĕркелĕхĕ (тистсиплина) кирлĕ, ака тата мĕншĕн комсомолĕссен тумалли ĕҫĕсем сойусра тăман ҫамрăксенĕнҫен нумайтарах.

## Кашни комсомолĕсăн кăтартса пана палла ĕҫе туса лымалла.

Комсомола кĕрекен ҫамрăксене сойус мĕнле ĕҫсем тутарать-ши? Куна хирĕҫ каласа парас пулсассăн, ку ыйтăва тĕпĕр майла лартăпăр: «комсомола ҫĕнĕрен кĕрекен ҫамрăкăн сойусран мĕн ыйтмалла», тейĕпĕр. Ҫи малтан унăн йаҫейккă пўровĕнҫен хăйне валли ĕҫ тупса пама ыйтмалла. Кун пек ĕҫсене: савăт комиттетĕнҫе, копператтивра, йе тата ытти орканисатсисенҫе, сăмахран каласан—«Топрохим», «Топрофлот» т. ы. орканисатсисенҫе те ĕҫлеме пулать. Нийепле ĕҫ те туман комсомолĕс, комсомол орканисатсинҫе пулма пултараймасть. Йаҫейккăра комсомолĕссенҫен нумайĕшĕ тĕрлĕ орканисатсисенҫе ĕҫлемеҫҫĕ пулсан, ку вара йаҫейккă наҫар ĕҫленине пĕлтерет.

**Хӑйӗн ӗҫӗнҫе комсомолӗсӑн, парттин пирвайхи йулташӗ пулмалла.**

Ҫак ҫӳлте каланӑ орканисатсисенҫе ӗҫлеме пуҫласассӑн комсомолесӑн, ҫи первайах унта ӗҫлекен комуниссен, вӗсене пулӑшса пыракан, ҫи лайӑх йултащӗ пулмалла: тӗрлӗрен пухусенҫе вӗсемпе пӗрле алӑ ҫӗклемелле, парттире тӑманнисен хушшинҫе акиттатси тунӑ ҫӗрте вӗсене пулӑшмалла тата вӗсене комуниссен йышӑнавӗсене пурнӑҫа кӳртме пулӑшмалла. Комсомолӗс — **вӑл** комуниссен парттин пирвайхи пулӑшаканӗ.

Сӑмахран калӑпӑр, акӑ савӑтра ӗҫлекенсен пуххи пуҫтарӑнать, ҫак пухха пымасӑр пӗр комсомолӗс та йулма пултараймасть. Комсомолӗсӑн ӗҫлекенсен (йе хресҫенсен) пухӑвӗсенҫе пуринҫе те пулмалла. Ку пухура, калӑпӑр, савӑт комиттетне суйласси ҫинҫен сӳтсе йавмалла. Комуниссем, ҫак савкома хӑйсен кӑнтитаҫӗсене кӳртесшӗн тӑрӑшаҫҫӗ. Анҫах тата, калӑпӑр, ҫакӑнтах парттире тӑман ӗҫлекенсем хӑшӗ-хӑшӗсем пӗрлешсе, хӑйсен кӑнтитаҫӗсене кӳртесшӗн тӑрӑшаҫҫӗ. Комсомолӗссен ҫак пухура хӑш кӑнитатсемшӗн сасӑ памалла-ши?

— Паллах ĕнтĕ, комуниссен кăнтитаҫĕсемшĕн памалла. Мĕншĕн? Мĕншĕн тесен, комуниссем ĕҫе парттире тăманисенҫен тĕрĕсрех туса пыраҫҫĕ. Парттире тăманнисем ҫас-ҫасах хăйсен савăҫĕ пурăнăҫĕшĕн, унăн интересĕсемшĕн ҫеҫ ĕҫлесе пыраҫҫĕ, комуниссем мĕн пур ĕҫлекенсен класĕн интересĕсемшĕн ĕҫлеҫҫĕ. Комуниссемшĕн пайанхи кун кăна палха мар. Вĕсем, пĕр хапрăк-савăтра тăвакан ĕҫсем ытти (респуплĕкри) хапрăк-савăтсене усă йе сийен тăваси ҫинҫен те тĕплĕн шухăшлаҫҫĕ, вĕсем респуплĕкри пурăнăҫа пурне те асра тытса тăраҫҫĕ. Кун пек шухăшлани парттире тăманнисен шухăшланинҫен тĕрĕсрĕх пулаť. Ҫавăнпа комуниссем парттире тăманнисенҫен тĕрĕсрех шухăшласа ĕҫе тунăран, комсомолĕсăн,пур вăхăтра та, комуниссен парттийĕшĕн сасă памалла. Анҫах ҫасҫасах пирĕн пухусенҫе комсомолĕссем коммуниссен партийĕшĕн сасă параҫҫĕ пулсан та вĕсем лайăх шухăшласа пĕлмесĕрех сасă параҫҫĕ. Ку йапала пирĕн комсомолĕссем, парттире тăманнисен пухăвĕнҫе пулас ыйтусенҫе малтан, хăйсен хушшинҫе татăклă сўтсе йавманнинҫен килет. Партти йаҫейкки вăл савкома, йалканашне, йе копперативв правле-

нине кўртме шухăшлакан кăнтитаҫёсем ҫин-ҫен, ёҫлекенсен пуххинҫе калаҫҫен малтан хăйсен пухăвёнҫе сўтсе-йаваŤ. Ҫавăнпа та комсомолёссем тёрлё пухусенҫе комунисемшён шухăшламасăр мар, тёплё татăклă шухăшласа илсе сасă паҫҫёр тесессён, вёсем комуниссемшён пёлсе акиттатсилеҫҫёр тесен, комсомол йаҫейккисен, парттире тăманнисен пухăвёсенҫе пулас ыйтусене, малтан хăйсен йаҫейккин пуххисенҫе сўтсе йавмалла. Йаҫейккăсем нумайăшё хаҫхи вăхăтра ҫавăн пек тумаҫҫё. Комсомола кёнё ҫух унта кёрекеннисен ҫакна асра тытса тăмалла. Йаҫейккăна ҫакăн пек тутарма тăрăшмалла.

## Комсомолёссем пёрмайах пёр шухăшпа, пёр-пёринпе ҫыхăнса ёҫлеҫҫё.

Анҫах комсомолёссем, вёсем, комуниссен парттийё хушакан ыйтусемшён сасă ҫеҫ памаҫҫё. Вăл комсомолёс пёлсе татăклă шухăшласа ҫак сёнўсемшён сасă параŤ пулсассăн, унăн тата ҫак комуниссен сёнёвёсемшён парттире тăманисем те сасă паҫҫăр тесе, вёсем хушшинҫе акиттатси тумалла. Ҫакăн пек ҫух комсомолёссем пур те пёр шухăшпа, пёр-пёринпе ҫыхăнса ёҫлени пйтё паха.

Сăмахран каласан — акă: пухура ĕç укçи (сарплаттă) çинӡен калаçаççĕ, ăна йӳнетес мар, йе ӳстерес мар теççĕ, йе тата урăх ыйтусем çинӡен калаçаççĕ. Çак ыйтусене йышăннă ӡух комсомолĕссен пĕр-пĕринпе лайăх хытă сыхăнса тăмалла. Вĕсен, пуху умĕн çемйере те, пуху вăхăтĕнӡе те, паллаканнисен хушшинӡе те, тата ытти вырăнта та, акиттатси туса, хăйсен йулташĕсене ĕçлекенсен ĕçе комуниссем хушнă пек тумаллипе, вĕсемшĕн мĕншĕн сас памалли çинӡен ăнлантармалла.

## Комсомолĕсăн пĕрмайах партти çинӡен астуса тăмалла.

Кунсăрăн пуçне тата комсомолĕссем хăйсем çине партти хущнă тĕрлĕ ĕçсене илеççĕ. Сăмахран, ĕçлекенсен миттинкĕне тăвасси, пур ĕçлекенсене те çак миттинкă мĕнле вăхăтра пулассине пĕлтересси, кирлĕ пулсассăн, пĕлтерӳсем çырасси, хаçата çырăнса илес текенсене (потписӡĕксене) пуçтарасси, тата нумай урăх ĕçсене те тăваççĕ. Çак ĕçсене тума партти йаӡейкки комсомолĕса хушсассăн, унăн ăна тĕрĕс, вăхăтра туса памалла. Анӡах кун пек ĕçсене партти йаӡейкки йĕркесĕр туса пымасĭ, комсомолĕссене тĕрлĕ ĕçсем

тума хупас пулсан, вăл вĕсене комсомол йаҫейккин пӳровĕ урлă парать. Хапрăк-савăтсенҫе, копператтивсенҫе, тата ытти тĕрлĕ орканисатсисенҫе те, ҫас-ҫасах комуниссен фраксийĕ пулать. Ку фраксине комуниссемпе пĕрле комсомолĕссен те кĕмелле. Кунта вĕсен, комуниссемпе пĕрле парттире тăманнисен пухăвĕсенҫе пулас тавлашулла ыйтусене, малтан тĕплĕ сӳтсе-йавмалла, кайран пухусенҫе комуниссем лартакан ыйтăва тĕрĕссине лайăхрах пĕлсе ҫитсен, ҫав ыйтушĕн сасă памалла, парттире тăманнисен хушшинҫе акиттатсилемелле, вĕсене каласа ăнлантармалла. Йулташсем нумайĕшĕ партти йаҫейккин, комсомол йаҫейккин, тата фраксисен хупă пухăвĕсем мĕншĕн кирлине, тата ҫак пухусенҫе, парттире тăманнисен хушшинҫе тумалла ĕҫсене, ыйтусене, малтан мĕншĕн сӳтсе-йавасси кирлине пĕлмеҫҫĕ. Ҫавăнпа вара ҫакна ăнланайманнисемшĕн, ку ĕҫ комуниссен парттийĕ, парттире тăманнисене шанманнине пĕлтернĕ пек туйăнать.

Анҫах лайăхрах шухăшласа пăхсассăн ку ун пек мар. Еҫ партти парттире тăманнисене шанманнинҫе мар, вăл ак мĕншĕн. Комуниссен парттийĕ хăйĕн тытăмлăхĕпе, пĕр шу-

хăшлă орканисатсилĕхĕ пирки, ĕçсене парттире тăманнисенҫен лайăхрах туса пыма пултарать. Çавăнпа та пирĕн партти ҫленĕсем тĕрлĕ пухусенҫе пĕр пек шухăшпа пулмасан, пĕр-пĕринпе лайăх çыхăнса тăмасассăн, парттире тăманнисем кам хыççăн пымаллине пĕлмеççĕ, вара вĕсем пирĕн парттине шанми те пулаççĕ. Сăмахран çакăна илĕпĕр: комуниссен хушшинҫе савком пуçлăхне кама лартасси çинен тавлашу пур. Пĕри Петров йулташа лартас тет, тепĕри урăх йулташа Çитăрăва лартасшăн. Кун пек пулсассăн комуниссен парттин йаҫейккийĕ çак тавлашуллă ыйтăва малтан хăйĕн пухăвĕнҫе сӳтсе-йаватьте, вара парттире тăманнисемпе пĕрле пулакан пухура, парттире тăракансем пур те, партти йаҫейкки йышăннă çыншăн, сассине параççĕ. Комуниссем çак çӳлте каланине тумасăр, парттире тăманнисен пухăвĕнҫе: „епир кама суйласси çинҫен хамăр хушăмăрта — йаҫейккăра килĕшме пултараймарăмăр, есир хăвăр кама суйлас тенисене суйлăр“ тесессĕн, вара мĕн пулĕ-ши? Кунпек пулни, вăл çак хапрăкра, йе савăтра çирĕп орканисатсиленнĕ партти ҫăмăрĕ çуккине пĕлтерет. Партти йаҫейккинҫе ик-виç йулташ йаҫейккăра

ытти ҫленсемпе пуринпе те, тавлашма пуҫласассӑн тата ҫак малтанхи йулташсем йаҫейккӑри ҫленсене нумайӗшне хирӗҫ, хӑйсен хыҫҫӑн парттире тӑманнисене те йертсе пырсассӑн, вара мӗн пулӗ-ши? Кун пек пулсассӑн партти — пӗр пек ҫирӗп хытӑ ҫыхӑнса тӑракан орканисатси пулаймасӑ, вӑл ишӗлет, вӑйсӑрланаӑ, вӑл вара хапрӑк-савӑтри ӗҫсене те аван йертсе пыма пултараймасӑ.

Ҫавӑнпа кун пек ан пултӑр тесен, пирӗн партти пур ҫӗрте те пӗрмайах ҫыхӑнса, орканисатсиленсе пыраӑ, тавлашуллӑ ыйтусене, вӑл пурне те парттире тӑманнисен хушшине кӑлармасӑ. Парттине ишме, сарпалантарма йурамасӑ, хамӑр хушӑри шухӑшсӗне ишме, пӗр пӗринҫен уйӑрса йама йурамасӑ, мӗншӗн тесессӗн, партти пур ӗҫе те парттире тӑманнисенҫен тӗрӗсрех шухӑшласа тӑваӑ. Партти ҫленӗ пур ӗҫе те лайӑхрах шухӑшласа пӑхса, пур йенҫен те пӗлсе, тӗрӗсрех тӑваӑ, унӑн пурнӑҫ пӗлӗвӗ те нумайтарах. Вӑл ыйтусене сӳтсе йавнӑ ҫух, хӑйӗн ҫеҫ тӑвас килнине малти шута илмесӗр, мӗн пур ӗҫхалӑх класӗн интерсӗсемшӗн тӑрӑшаӑ. Ҫавӑнпа та партти ҫленӗн, пирӗн совет влаҫне

çирĕплетме, мĕн пур ĕçхалăхне усă тума, парттире тăманнисен хушшинҫе партти шухăшĕсене, партти йышăнăвĕсене туса пымалла, вĕсене тума унăн нумайрах хатĕрленмелле. пĕр-пĕринпе лайăхрах çыхăнса çирĕпленмелле. Çапла вара çакăнта каланисенҫен, епир комсомолĕсăн пирвайхи тĕп ĕçне (опĕсăннăçне) куратпăр, вăл акă: комсомолĕсăн пур çĕрте те паттийе пулăшаканĕ пулмалла, тата хапрăк-савăтри йе ытти опшҫăствă органисатсийĕсенҫе—пуринҫе те ĕçлемелле. Анҫах ку çеç сахал. Комсомолĕсăн çак органисатсисенҫе хăй çеç ĕçлени нумай мар-ха.

### Комсомолĕссен хăйсен ĕçне сойусра тăман çамрăксене кўртсе ĕçлеттерсе пымалла.

Кашни комсомолĕсăн хăй хыççăн парттире тăман ĕçлекенсене йертсе пыма пĕлмелле, вĕсене хăй пĕлнине, илтнине каласа кăтартма пĕлмелле: партти пухăвĕсенҫе сăмахсем, токлатсем тумалла, политтĕкĕ крушокĕсенҫе илтнине, вĕреннине каласа памалла. Сăмахран комсомол йаҫейккин пуххине илĕпĕр. Ҫăс-ҫасах сойуса кайарахпа çеç (тин çеç) кĕнĕ çамрăксене хăш-хăш ыйтăва йаҫейккă тĕрĕс йышăнман пек туйăнаť. Вĕсен

кун çинҫен калаçасси те килет, анҫах хӑйсен шухӑшсене вӗсем тӗрӗс, татӑклӑ каласа пама пултараймаççӗ. Санӑн пуçӑнта темӗн ҫухле нумай тӗрӗс шухӑшсем пулсан та, есӗ вӗсене ҫӗлхепе тӗрӗс каласа пама пултараймастӑн пулсассӑн, унтан мӗн усси пулаӗ-ха вара? Çавӑнпа та парттире тӑманнисен хушшинҫе тӗрӗс, лайӑх ӗçлесе пырас тесессӗн, ху шухӑшусене сӑмахпа тӗрӗс каласа пама пӗлни, тӗрлӗ хаçатсем çине, йе стенӑ хаçаҫӗ çине статйиасем çырма пӗлни, хӑвӑн ӑшри шухӑшусене хут çине тӗрӗс çырса пама пӗлни кирлӗ. Хӑш ҫух тата çакӑн пек комсомолӗссем те пулаççӗ: пӗр-пӗр пухура комсомолӗс тухса калаçаӗ, анҫах вӑл тӗрес калайман пирки, йе сӑмахсене аван çавӑрса калайман пирки, йе тытӑнкӑлӑрах калаçнинҫен, йе тата урӑх йанала пирки, унӑн калаçни аван тухаймасӗ, йе кулӑшлӑ пулаӗ. Çавӑн пек ҫухне итлесе ларакансем кулни пирӗн комсомолӗссене питӗ хытӑ хӑратаӗ те, вара вӗсем кун хыççӑн уйӑхӗ-уйӑхӗпех сӑмах ҫӗнме хӑраççӗ.

**Хӑвӑн шухӑшусене каласа пама тата ҫамрӑксемпе ытти ӗҫлекенсене партти сатаҫҫисем ҫинҫен ӑнлантарса пама пӗлмелле.**

Ҫавӑн пек пулсассӑн, вӗсем вара хӑйсен шухӑшӗсем тӗрӗс пулсассӑнта ҫӗнмеҫҫӗ. Ку йапала питех те аван мар. «Кашкӑрсенҫен хӑрасан вӑрмана кайма кирлӗ мар», теҫҫӗ. Ҫавӑн пекех, халӑх умӗнҫе аван калаҫма вӗренес тетӗн пулсан, санӑн кулнисенҫен хӑрама йурамаст. Комсомолӗсӑн халӑх умӗнҫе калама вӗренмеллех. Санӑн паттӑр пулса пухусенҫе тӗрлӗрен ыйтусене сӳтсе йавнӑ ҫухне, ку ыйтусем пирки, хӑвӑн тӗрлӗ шухӑшсем пур пулсассӑн, вӗсене пурне те тухса каласа памалла. Калаҫнӑ ҫӳх лайӑх, хитре калаҫма кӑна пӗлмелле мар, сӑмахсем хушшинҫе ҫас-ҫасах ытлашши сӑмахсене, сӑмахран калӑпӑр; „снаҫӗт" йе кашни сӑмах хыҫҫӑн пекех „йулташсем" тенисене, ҫас-ҫасах каланисенҫен ҫеҫ мар, тата ху шухӑшусене ытлашши сӑмахсемпе каласа ҫынсене ӑнланмала мар сӑмах пуласран та сыхланмалла. Пӗтӗм шухӑша пилӗк (5) минут хушшинҫе (темӗн пек пысӑк шухӑшсем пулсассӑн та) итлекенсене кӗскен, ӑнланмалла каласа пама вӗренмелле. Анҫах кун пек калаҫма ҫак ӗҫ ҫинҫе нумай

ĕçлесессĕн çеç (оппăтпа) вĕренме пулаť. Анђах нумайĕшĕ çакăн пек калаçнă ђух ытларах та калаçаççĕ. Вĕсем нумай кăна мар, никама кирлĕ марри çинђен те калаçаççĕ. Вĕсене вара „çапкаланђăксем“ теççĕ. Калаçма вĕренесси, вăл „çапкаланма“ вĕреннине çеç пĕлтермест, вăл ытти çынсен умĕнђе хăвăн шухăшусене тĕрĕс татăклă каласа пама вĕренессине пĕлтĕрет. Есĕ савăтра машшинă хыçĕнђе тăнă ђух, санпа йунашар тăракăн йулташу, санран пайан ху вуланă хаçатсем çинђи çĕнĕ хыпарсем çинђен ыйтсассăн, санăн уна каласа ăнлантарса памалла. Пухусенђе тухса калаçнипе есĕ парттире тăман ĕçлекенсене ху вуланă хаçатсенђи çĕнĕ хыпарсене, йе тата хапрăк-савăт пурнăçĕ çинђен кĕскен. ăнланмалла каласа пама вĕренетĕн. Ку питĕ кирлĕ йапала, мĕншĕн тесен, çакăн пек ăнлантарса пама пĕлмесессĕн сана парттире тăман кашни ĕçлекенех хăйĕн сăмахĕпе путарса лартма пултараť. Ђас-ђасах акă çакăн пек те пулкалаť: ĕçлекенсем пĕђĕк ушкăна пухăнаççĕ те, хăйсен хушшинђе тĕрлĕ ĕçсем çинђен тавлашма пуçлаççĕ. Вĕсен хушшинђе комунис есĕ пĕђђен çеç пулатăн. Пĕрри вĕсен пĕр тĕслĕ, тепĕри тепĕр тĕслĕ калаçма тытăнаççĕ.

Ĕçлекенсем хăш ђухне комуниссенђсн те, вĕсем тĕрĕс ĕçлемеççĕ тесе, кулкалаççĕ. Çавăн пек ђухне есĕ комуниссен хутне кĕрсе ĕçлекенсене каласа ăнлантарса, ђĕсен сăмахĕсем тĕрĕс маррине кăтартса параймасассăн, вĕсем вара санран та кулаççĕ. Акă мĕншĕн сана калаçма вĕренесси, шухăшусене хут çине тĕрĕс çырма пĕлесси, тата çынсем умĕнђе тухса калама пĕлесси питĕ кирлĕ.

## Йађейккă пўровĕ.

Пухусенђе тата пухăва йертсе пыма та вĕренеççĕ, пуху претçетаттĕлĕпе, çыруçĕ пулма, пухури ытти çынсене, ытти ĕçлекенсене йертсе пыма вĕренеççĕ. Комсомол йађейккисенђе çак пухусемсĕр пуçне тата виçĕ (3) уйăха йађейккă пўроне суйлаççĕ. Кашни йађейккăри пўро ђленĕ, вăл çав комсомолĕсах, анђах, вăл ытларах вĕренĕскер, нумайрах ĕçлесе курнăскер, вăл хăй вĕренсе ĕçлеме кăна мар, ытти комсомолĕссене йертсе пыма та пултарать, урăхла каласассăн, вăл вĕсене пĕрлештерсе, вĕсене тĕрлĕ ĕçсем парса, çак ĕçсене комсомолĕссем йепле пурнăçа кўртсе пынисене сăнаса пырать, тата ытти пĕлеймен комсомолĕссене мĕн кирлине ка-

ласа ăнлантарат̆. Çĕнĕ йулташа пӳро ҫленне суйласассăн малтан пĕрмайах ăна ĕç питĕ йăвăр пек туйăнат̆, вăл хăйĕн тумалли ĕçĕсене: „пурнăçа кӳртсе çитерейместĕп" пулĕ тесе шухăшлат̆. Анҫах пĕр икĕ уйăх иртсессĕн, вăл хăйĕн ĕçĕсемпе лайăххăнтарах паллашса çитет те, вара аван ĕçлекен пулат̆. Кун хыççăн ăна копператтив правленине те, савкома та т. ы. çĕре те ĕçлеме йама йурат̆. Комсомол орканисатсин шкулĕ витĕр тухнă хыççăн, ăна вара çĕнĕ ĕç те йăвăрах пулмаст̆.

Епир комсомол йаҫейккисен пӳровĕсене çĕнĕрен суйланă ҫух кашнинҫех çĕнĕ йулташсене кӳртме тăрăшатпăр. Кăна епир йаҫейккăн пӳровĕ урлă, тата йаҫейккăра пур комиççисем витĕр: економ комиççи, политçут комиççи т. ы. витĕр нумайтарах комсомолĕссене кăларса, вĕсене комсомол ĕçне лайăх ĕçлеме вĕрентесшĕн тăватпăр. Çапла ĕнтĕ, епир малтан «тĕрлĕ опшҫăствă ĕçне туса пыманни пĕр комсомолĕс та ан пултăр» терĕмĕр пулсассăн, халĕ ĕнтĕ кун çумне «комсомолăн ĕçĕсене туса пыманни пĕр комсомолĕс та ан пултăр» тесе хушса лартма пултаратпăр. Çакă икĕ тĕп сатаҫҫăсем — опшҫăствă ĕçĕпе комсомол ĕçĕнҫе хастарăн

ĕçлесси—пĕтĕм комсомол орканисатсин тĕп никĕсĕ пулса тăраççĕ. Комсомол, вăл хăйĕн орканисатсинђи çамрăксен «хăйсен ĕçленипе» (самодеятельность) çеç тытăнса тăраĭ.

**Комсомолĕссен «хăйсем ĕçлесе пыни».**

Çамрăксем пурне те хăйсем тăваççĕ. Йађейккă пўровĕне те хăйсем суйлаççĕ, хăйсене мĕнле крушоксем кирлине те, хăйсем суйлаççĕ, йађейккă пухăвĕсене те, хăйсĕм пуçтарса, хăйсем иртереççĕ т. ы. Çак «хăйсем ĕçлесе пынипе» комсомолĕссем парттин ĕçлеме пĕлекен, йурăхлă ђленĕсем пулма вĕренеççĕ. Комсомолра çак çамрăксен «хăйсем ĕçлени» пулман пулсан, вара комсомол орканисатсийĕ те кирлĕ пулас çукђĕ. Çакăн пек пулман пулсан пирĕн партти, хăйĕн çумĕнђе çамрăксен хушшинђе ĕçлекен уйрăм кăна та тума пултарађђĕ. Ку уйрăмсенђĕ ĕçлеме, партти ватă парттийтсăсене уйăрса параĭ те, вара вĕсем çамрăксем валли тĕрле клупсем, крушоксем орканисатсилетђĕç, тата çамрăксене тĕрлĕ уйрăм ĕçсем сатанисем парса тăма пултарĕђђĕç. Çакăн пек уйрăм, пирĕн хĕрарăмсен хушшинђе ĕçлекенни пур. Пирĕн ăрасна хĕрарăмсен партти орканисат-

сийе çукки питĕ тĕрĕс, мĕншĕн тесессĕн, çитĕннĕ хĕрарӑмсем парттине кĕрсе унта ваййĕ çитне таран,хастарӑн ĕçлеме пултараççĕ. Анҫах комсомолри çамрӑксем, хӑйсем çамрӑк пирки, йе лайӑх вĕренсе çитейменнипе, парттине кĕрсе, унта ĕçлеме пултараймаççĕ. Çавӑнпа та çамрӑксене уйрӑм çамрӑксен «хӑйсем ĕçленипе» тытӑнса тӑракан орканисатси кирли, паллах, вĕсем унта çеç, çак «хӑйсем ĕçленипе» çеç партти йурӑхлӑ ҫленĕсем пулма вĕренме пултараççĕ.

Çавӑнпа пирĕн прокрамӑра та: «çамрӑксен хӑйсем ĕçлени» (вырӑсла куна «самодеятельность» теççĕ)—комунисмлӑ воспиттанин никĕсĕ тенĕ.

Анҫах кун пек калани, вӑл партти комсомола çул кӑтартса пыманни пулмасть. Партти комсомола çул кӑтартса пымасассӑн, пирĕн комсомолĕссем хӑйсен ĕçĕсенҫе нумай йӑнӑшусем тӑвĕҫҫĕç, анҫах партти çул кӑтартса пынӑ пирки вĕсем пулмаççĕ. Парттин пĕлӳ те, ĕçлеме пĕлни (опыт) те нумайрах. Çавӑнпа вӑл комсомола вĕрентсе ӳстерет, вӑл хӑйĕн ĕçлеме пĕлнине (опыт), ĕçхалӑхĕн ĕçĕшĕн ывӑнмасӑр кĕрешекен ватӑ револютсионерсен йӑллине (традиция) комсомола — парттийе

уlăштарса тăракана — парать. Комсомола çул кăтартса пынипе, унăн ĕçĕсене майлаштарса пынипе, партти ăна (комсомола) хăйĕн ĕçне хăйех туса пыма канçĕрлемест. Пирĕн комсомол, хăйĕн ĕçĕнҫе партти кăтартса панă çулпа пырса, парттирен уйрăм ĕçленипе тата хăй ĕçлесе пынипе çеç, комсомолĕссенҫен комуниссен партти валли йурăхлă уlăшу—сменă хатĕрлеме пултарать. Малалла епир кашни комсомолĕсăн умĕнҫе тăракан виççĕмĕш тĕп ĕçĕ (апесаннăçĕ) çине куçăпăр. Ку виççĕмĕш ĕç—вĕренес ĕç пулать. Практиккă ĕçĕнҫе ĕçлеме çеç мар, ăслăлăха вĕренес ĕçре те ĕçлемелле.

## Ленин йаҫĕ.

Комсомол халĕ — «Раççейри Çамрăксен Лениннăн Комунислă Сойусĕ» йатлă. Çак йата йышăнни, вăл пире Ленинисăма вĕренме хушать. Нумайĕшĕ ку ĕçе çăмăл тесе шухăшлаççĕ, анҫах ку çăмăл ĕçех мар. Ку çăмăл марри Ленин йулташ йăвăр, ăнланмалла мар çырнинҫен килмест (çырасса вăл питĕ çăмăл, ăнланмалла çырнă). Ленин çырнине ăнланас пулсассăн малтан кирлĕ таран политтĕккăна пĕлмелле, тата ҫи кирли—кашни комсо-

молесӑн хаҫат вулама, ҫӑмӑлрах политтӗк кӗнекисене вулама, вӗсене ӑнланма вӗренмелле. Парттин кашни ҫленӗн партти хаҫатне вуласа тӑмалла, хӑй партти хаҫатне вуламан ҫын, вӑл парттин мӗнле ҫленӗ пулӗ-ши? Комсомолӗс хаҫат-кӗнеке вулама пӗлмест пулсассӑн, унӑн ку ӗҫе ҫасрах вӗренме тӑрӑшмалла. Епир кӑна кӑҫта вӗренме пултарӑпӑр? Ҫак ӗҫе комсомолӗссем политтӗк крущокӗсенҫе туса пыраҫҫӗ.

## Политтӗккӑ крушокӗсем.

Политтӗккӑ куршокӗсем пирӗн тӗрлисем пур: пӗррисем—нумайрах пӗлекеннисем валли, теприсем—сахалтарах пӗлекеннисемпӗн. Ҫӑнахах та, комсомола ҫамрӑксем 14-15 ҫултан пуҫласа кӗрсе 23 ҫула ҫитиҫҫен унта тӑма пултараҫҫӗ пулсассӑн, кашни йаҫейккӑрах ҫул йенҫен тӗрлӗ ҫамрӑксем пур, вӗсен пӗлни те, вӗренните тӗрлӗ. Комсомолӑн ҫамрӑксене пурне те вӗрентсе пымалла: вӗсем ҫамрӑккисем (16-18 ҫултисем) пулсассӑн та, фапсавуҫӑра вӗренекенсем пулсассӑн та, парттине ыран-пайан кӗрес пек тӑракан ӳссе ҫитне ҫамрӑксем пулсассӑн та, вӗсене пурне те вӗрентмелле. Ҫак ӗҫе туса пыма пирӗн

сойусра политтĕк тĕлĕшĕнҫен ҫутта кăларас ĕҫĕн тĕрлĕрен йĕркесем, политтĕккă кушокĕсем пур.

Комсомола кĕрсессĕнех, санăн комсомолăн прокраммине те, уставне те лайăх вĕренме тытăнмалла. Кун хыҫҫăн есĕ 1-мĕш сыпăклă политтĕккă крушокне кĕретĕн, унтан политкушокăн 2-мĕш сыпăкне куҫатăн, йулашкинҫен 3-мĕш сыпăкне куҫатăн. Комсомолра тăнă ҫух политкрушоксенҫе тăрăшса вĕренсессĕн, вĕсен саҫаттийĕсене каймасăр йулмасассăн пĕр виҫĕ ҫул хушшинҫе есĕ политтĕккă тĕлĕшĕнҫен ҫителĕклĕ пĕлекен ҫамрăк пулатăн. Политтĕккăна вĕренес ĕҫе питĕ кирлĕ ĕҫех мар тесе шутлама йурамсть, вăл комсомолĕсшĕн питĕ кирлĕ.

Политтĕккă крушокĕсенҫе ĕҫ ăнса пырасси—вăл саҫаттисенҫе пулакан ыйтусене ҫамрăксем ăнланнинҫен, тата вĕсене йуратса аван итленинҫен килет. Ҫавăнпа крушокри ҫамрăксем саҫаттисене питĕ йуратсах ҫўремеҫҫĕ пулсассăн, йе вĕсем лайăх ăнланмаҫҫĕ пулсассăн, вĕсен кун ҫинҫен крушок рукковотиттĕле пĕлтĕрмелле.

## Хута вĕреннипе политтĕккăна вĕренни.

Тата пирĕн комсомолра ҫас-ҫасах пулакан йапала—сийен ҫине кăтартса памалла. Пирĕн нумай комсомолĕссем тĕрлĕ ҫĕрте: касхи курссенҫе, рапфаксенҫе, пур йенҫен те вĕрентекен крушоксенҫе (общеобразовательные кружки) ернере 5—6 хут пуҫтарăнса вĕренеҫҫĕ. Ҫакăн пирки вĕсем хăйсен комсомол ĕҫĕсене пурнăҫа кӳртсе пыма пултараймаҫҫĕ: савăтри, йе ытти халăх орканисатсийĕсенҫе ĕҫлемеҫҫĕ, комсомол пухăвĕсене ҫӳремеҫҫĕ, политкрушокĕсенҫе вĕренмеҫҫĕ, йе вĕсен саҫаттисене ҫӳресшĕн мар. Ҫак сийене вĕсем, йе вăхăт ҫук пирки, йе тата ытти ĕҫсем пирки пулаӗ, теҫҫĕ. Ҫавăн пек ҫух кунта ак ҫапла каламалла: «есĕ хута вĕренесшĕн ҫеҫ тăрăшатăн, комсомолăн ĕҫĕсенҫе хастарлă ĕҫлестĕн пулсассăн, есĕ мĕнле комсомолĕс-ха вара?» тесе. Комсомол ĕҫне туса пыман ҫамрăк, вăл комсомолĕс пулма пултараймасӗ. Ҫавănпа та пирĕн кашни комсомолĕсăн комсомол ĕҫĕн тĕп йĕркипе лайăх пĕлсе тăмалла. Ку тĕп йĕрке—хапрăк-савăтри, йе тата ытти орканисатсисенҫе хастарлă ĕҫлесси, комсомол орканисатсийĕ хушнă ĕҫсене пурăнăҫа кӳртсе пырасси, тата политтĕккă тĕлешĕнҫен

пĕлесси, вĕренесси. Вĕсемсĕр пуçне, тата комсомолĕсăн хута вĕренесси те питĕ кирлĕ, анђах çакна вĕреннĕ ђух, çав вăхăтрах орканисатси хушнă комсомолăн ĕçĕсене те туса пымалла. Сана комсомол рапфака вĕренме йарат̆ пулсассăн, санăн рапфакра вĕреннĕ ђух та комсомол ĕçĕсене туса пымалла. Кĕскерех каласассăн, вĕренӳпе практикă ĕçне майлаштарса пымалла — вĕреннĕ ђух ĕçлесе пымалла, ĕçленĕ ђух вĕренсе пымалла.

## Комсомолра ђи кирли.

Кашни комсомолĕсăн ђи малтанах политтеккăна çителĕклĕ пĕлсе тăмалла. Политтеккăна пĕлмесессĕн йурăхлă, çирĕп пођшевик пулма май çук. Çавăнпа санăн умăнта икĕ крушок: трамкрушокпа политкрушок тăраççĕ пулсассăн, санăн ђи пирвайах политкрушока каймалла. Комсомолĕс ку ĕç çине çакăн пек пăхат̆: кăçта вĕренсен вăл хайĕнђен лайăхрах, йурăхлă — комунис хатĕрлеме пултарат̆: шкулта-и, мĕнле шкулта, мĕнле ушкăнра, крушокра-и, мĕнле крушокра? Вара кăçта ђасрах, лайăхрах, вĕренме пулат̆, çавăнта кайат̆. Акă калăпăр: комсомолра трамкрушоксем кирлĕ-ши? Кирлĕ. Акă мĕншĕн: ђи

малтан, трамкрушок вӑл парттире тӑман ҫынсен хушшинҫе тӑвас акиттатси ӗҫӗн шутне кӗрсе, унӑн пӗр майӗ (способӗ) пулса тӑрать. Ку акиттатси — куракансене спектаккӑлсем урлӑ, ҫав ҫӗрӗ картин кӑна куҫпа та курнӑ, хӑлхапа та илтнӗ ҫухне, курни ҫинҫен шухӑшлаттарса астутарать, ҫавӑнпа вӑл пысӑк вырӑн йышӑнса тӑрать. Тепӗр йенҫен трамкрушок вӑл ҫамрӑксемшӗн усӑллӑ, канас, выҫас ӗҫӗн майӗ (способӗ). Ҫак йапала ҫамрӑксемшӗн питӗ кирлӗ. Ҫӑнахах та ҫамрӑксен кунӗ кунӗпе иртен пуҫласа каҫҫен ӗҫлесе, политтӗккӑ пӗлӗвӗсене ӳренсе, пӗртте хаваслӑ вӑйӑсемпе, йе спортпа уҫӑлмасӑр, канмасӑр, лармалла мар-ҫке. Ҫук, вӑйӑсем, спорт комсомолӗссемпе ҫамрӑксемшӗн пуриншӗн те кирлӗ, питӗ аван йапала. Анҫах ҫапах та епир вӗсене комсомолӗсӑн кирлӗ тӗп ӗҫӗ—тума пултараймастпӑр. Комсомолӑн тӗп ӗҫӗ политтӗккӑ ӗҫӗ, ҫамрӑксем хастарлӑ ӗҫлени, тата политтӗккӑна вӗренни пулмалла, ку ӗҫсем, комсомолӑн ӗҫӗсен хушшинҫе варрине йышӑнса тӑмалла, ҫи ҫаплӑ вырӑн йышӑнса тӑмалла.

Ҫак ӗҫсене туса пыма кансӗрлекен урӑх ӗҫсене пӗтермелле, йе иккӗмӗш ҫеретре туса пымалла.

**Виçӗ ӗç.**

Çапла ӗнтӗ епир кашни комсомолӗс умӗнђе виçӗ тӗп ӗç тăнине куратпăр. Пирвайхи ђи пысăк, тӗп вырăна йышăнса тăракан ӗç—савăтри орканисатсисенђе, ушкăнсенђе, йалти комсомолӗс пулсан, йалти тӗрлӗ орканисатсисенђе (ушкăнсенђе) ӗçлесси: ун ђухне пӗрмайах комуниссен парттине пулăшса вăл хушнисене туса, унăн ресољутсийӗсемшӗн сасă парса, парттире тăманнисен хушшинђе акиттатси тумалла. Иккӗмӗш ӗç—комсомолăн ӗçӗнђе вăй çитнӗ таран хастарăн ӗçлесси, ђлен укçине вăхăтра тӳлесси, пухусене сиктерсе хăвармасăр çӳресси, орканисатси уйрăм хушнă ӗçсене (сатанисене) вăхăтра пурнăçа кӳртсе пырасси, калăпăр, йађейккă клупра тешурный пулма хушаť, йе çтена хаçађӗ çине çырма хушаť т. ы. — çавсене комсомолӗсăн пурне тетӗрӗс туса пымалла. Тата виççӗмӗш ӗçӗ—политтӗккă крушокӗсенђе политтӗккăна вӗренесси. Çакăнта çырнă комсомолӗсăн тумалли виçӗ тӗп ӗçсене кашни комсомола кӗнӗ çамрăкăн пурнăçа кӳртсе пымалла. Çакă виçӗ опесăннăçа вырăна кӳртсе пымасассăн, йе нађар туса пырсассăн, вара сана: вăл комсомол тистсиплинăне пăхăнмаcť, вăл комсомол сатађђи-

сене те пёлмест, теççĕ. Ҫăнахах та комсомол орканисатсийĕ, çакăншăн, комсомолĕссене, вĕсем тин çеç сойуса кĕнĕскерсем пулсан, вĕсене питĕ хытах айăпламасĭ, мĕнгĕн тесен, сойусра тăман çамрăк тистсиплинăна тытса тăма кăçтан вĕрентĕр-ха. Анҫах комсомолра нумайранпах тăракан йулташсем пулсан, вĕсене вара çакăншăн хытăрах айăплаççĕ, мĕншĕн тесен, вĕсен комсомол орканисатсийĕ тистсиплинăсăр тытăнса тăма пултарайманнине, пĕлмелле ĕнтĕ. Комсомолăн йышăннă ĕçĕсене хыттăн туса пымалла. Сăмахран калăпăр: çемйери çынсем комсомолĕса комсомолăн пуххисене кайма ҫараççĕ, йе кансĕрлеççĕ пулсассăн, комсомолĕсăн çапах та çак пухусене пымаллах. Йе тата семйери çынсем ăна комсомолĕса тума йураман ĕç тума (сăмахран: урама тухса суттума) хушаççĕ пулсассăн, комсомолĕсăн кун пек ĕçе тумалла мар. Комсомолăн тистсиплинĕпе комсомолĕссен ĕçĕсем пуринҫен те паха пулмалла.

## Пĕр-пĕринпе çыхăнса пĕр шухăшпа (орканизованно) ĕçлемелле.

Халĕ ĕнтĕ пирĕн ума çакăн пек ыйту тухаĭ: мĕнле-ха вăл комсомолĕсăн парттире

тăманнисемпе пĕрле пулакан пухусенђе пĕрмайах комсомол йађейкки йышăннисемшĕн сасă памалла? Çак ыйтуна комсомолĕссенђен нумайĕшĕ ăнланаймаççĕ: «сăмахран, комсомол йађейкки тĕрĕс мар решени йышăннă пулсассăн та, манăн унпăн сасă памаллаи-ха?» теççĕ вĕсем. Нумайĕшĕ сойусра нумайранпа мар тăракан йулташсем ђас-ђасах комсомол йађейккин пухăвĕнђе пĕр пек йышăнаççĕ, кайран парттире тăманнисен пухăвĕнђе хăйсен шухăшĕсене улăштараççĕ те, йађейккăра йышăннине хирĕç хăйсен сассисене параççĕ. Комсомолра кун пек тума йурамасть.

Комсомол йађейкки йышăннă постановлени санăн шухăшупа тĕрĕс пек туйăнать пулсан та, тĕрĕс мар пек туйăнать пулсассăн та, парттире тăманнисен пухăвĕнђе санăн, пур пĕрех çав постановленишĕн сасă памалла.

Кун пек тумасассăн мĕн пулĕ вара? Парттире тăманнисем комсомол çине мĕнле пăхма пуçлĕç-ши вара? Мĕнле пулассине епир малтан комуниссен партти йышăнăвĕсемшĕн сасă памалли çинђен çырнă çĕрте кăтартнă паллăранах пĕлетпĕр. Комсомолĕссене парттире тăманнисен пухăвĕсенђе йађейккă йышăннисене хирĕç сасă пама ирĕк парсассăн,

вара орканисатси ишӗлме, унӑн вӑйӗ пӗтме пуҫлаҭ; ун пек пулсассӑн йаҙейккӑ постановленипе килӗшмен комсомолӗс кашни хӑй йеннелле парттире тӑманнисене ҫавӑрма пуҫлаҭ. Вара йаҙейккӑ ишӗлсе анма пултараҭ. Йаҙейккӑра тӗрлӗ ыйтусем сӳтсе-йавнӑ ҙух, ҫав ыйту пирки есӗ комсомол-пухӑвӗнҙе ху шухӑшусене пурне те калама пултаратӑн, ытти комсомолӗссене хирӗҫ те калама пултаратӑн. Анҙах йаҙейккӑ пӗр постановлени йышӑнсассӑн, комсомолӗссен пурин те ҫак йышӑнушӑн хытӑ тӑмалла. Акӑ мӗншӗн парттире тӑманнисен пухӑвӗсенҙе санӑн йаҙейккӑ йышӑнӑвӗшӗн, вӑл санӑн шухӑшупа тӗрӗс-и, тӗрӗс мар-и пур пӗрех сассуна памалла, кирлӗ пулсассӑн пухура ӑна йышӑнҙӑр тесе, тухса сӑмах каламалла.

## Райкомпа тата партти йаҙейккипе ҫыхӑнса тӑрасси.

Анҙах куна хирӗҫ ыйтӑҫӗ: «манӑн шухӑшпа йаҙейккӑ ҫапах та тӗрӗс мар йышӑну тунӑ пулсассӑн, йе ку йышӑну пысӑк ыйту пирки пулнипе, ӑна пурнӑҫа кӳртсен, вӑл пысӑк сийен тума пултараҭ пек пулсассӑн, вара мӗншӗн тӑвас-ха?» тесе. Кун ҙухне, акӑ мӗн

тумалла: парттире тăманнисен хўшшинђе йађейккăна хирĕç тухса пур пĕрех каламалла мар, анђах ку ыйтăва, йе партти йађейккинђе, йе комсомолăн райкомĕнђе йе тата укомĕнђе лартмалла. Ђăнахах та йађейккă йăнăшма та пултарать, çавăнпа унăн тĕрлĕ йышăнăвĕсем те тĕрĕс мар пулма пултараççĕ. Есĕ шухăшлани тĕрĕс пулсассăн, вара Р.Ç.Л.К.С. Райкомĕ, йе Укомĕ, йе партти йађейкки çак йышăнăва тўрлетĕçĕ. Çавăнпа та комсомолĕсăн йађейккă тĕрĕс мар ĕçсем тунине курсассăн, аллине усса ларма йурамасть. Çук, ђĕнмесĕр лармалла мар; комсомолĕссен ку ыйтăва йађейккăна тепĕр хут астутармалла. Анђах ку ĕçе парттире тăманнисен хушшинђе пуçламалла мар. Ку тавлашуллă ыйту, комсомола çул кăтартса пыракан, унăн йăнăшăвĕсене тўрлетсе пыракан комуниссен парттинђе, йе комсомолăн çўлĕрех тăракан оркăнĕсенђе пуçласа йамалла. Акă мĕн вăл комсомолăн йĕркелĕхĕ (тистсиплинă).

**Комсомолĕсăн парттире тăман çыншăн примерлă пулмалла.**

Кашни комсомолĕсăнах комсомолăн йĕркелĕхне çеç хытă тытса тăмалла мар, унăн хăйĕн ĕçĕпе пĕтĕм сойусра тăман çамрăксене

пример, çулмай кăтартса пымалла. Ку ĕç пит çăмăлах мар, вăл питĕ кирлĕ ĕç, мĕншĕн тесессĕн, комсомолĕс хăйĕн ĕçĕпе парттире тăманнисене мĕнле ĕçлемеллине, хăйсене хăйсем мĕнле тытса тăмаллине (поведение), ĕçе мĕнле тумаллине пример кăтартмасассăн, вĕсем комсомолĕссен çăмахĕсене ĕненмеççĕ. Вара вĕсем комсомолĕсăн акиттатсине катăк çур пус вырăнне те хумаççĕ.

### Ĕç ăнăçуне вăйлăлăхпе çĕклентермелле.

Пирĕн умра халĕ пĕр питĕ пысăк ĕç ăнăçупе вăйлăлăхне хăпартасси тăрать. Пирĕн комуниссен парттийĕ çак пысăк сатаҫҫа пур ĕçлекенсен умне те тăратрĕ. Малалла ĕçлекенсен ĕçленĕ ҫух кашни тата вăйлăрах, тата пултарулăрах, тата ăнăçлăрах ĕçлемелле. Нумай хапрăк-савăтсенҫе пирĕн ку таранҫҫен çакнашкал пулнă: ĕç вăхăҫĕ 8 сехет çеç пулин те, ĕçлекен çак 8 сехете пĕтĕмпех тултарса ĕçлемен; тĕрĕссипе вăл сехет туллийах 4 сехет кăнă ĕçленĕ. Кун çинҫен çакна щутласа кăларнă: пĕтĕм С.К.Р.С-ҫи ĕçлекенĕсем хăйсен 8 сехетлĕ ĕç вăхăтĕнҫе пĕр сехет ытларах çителĕклĕ тултарса ĕçленĕ пулсассăн, пирĕн Совет Респуплĕкĕ, хăйĕн аллине 180

мёлйун тенкё тупăш (прибыль) илетҫё. Ку питё пысăк укҫа, ку укҫапа епир нумай савăтсем ҫёнёрен лартма пултарăттăмăрҫё, нумай шкулсем уҫăттăмăрҫё, ҫавă вара хамăр пурăнăҫа лайăхлататҫё. Савăтра ёҫлекенсем халё нумайёшё ёҫ хакне пысăках илеймеҫҫё.

Ак ҫак ёҫ хакне епир пёр майпа ёҫ ăнăҫуне, вăйлăлăхне, пултаруне ҫёклентерниие ҫеҫ ӳстерме пултаратпăр.

Епир ҫак сатаҫҫа пурăнăҫа кӳртсессён, вара ёҫлекенсен ёҫ укҫи ҫултан ҫул пысăкланса пырё, тата кунпа пёрлех ёҫлекенсен пурăнăҫё те аванланса пырё. Ҫакна пурăнăҫа кёртес тёлёшпе епир мён тăватпăр?

Ҫи малтан комуниссен партти профсойуссене ёҫлекенсен ёҫ вăхăтёнҫе мён ҫул ёҫлемелли нормăсене пăхса тухма, вёсене пысăклатма май тупма, тата ёҫ хакне пăхса тухма хушрё. Пирёншён ёҫлекенсем, ёҫлени тăрăх (вырăсла «сдельно» тетпёр) укҫа илсе, ёҫе ăнăҫуллăрах тума хăйсем тёллён тăрăшни кирлё. Ҫакăнпа пёрлех тата претпрйаттисен (хапрăк-савăтсен) ёҫне те лайăхлатмалла. Анҫах ҫак сатаҫҫăсене пурăнăҫа кӳртес пулсассăн пирён парттире тăманнисен хушшинҫе нумай калаҫса, вёсене ăнлантармалла,

парттире тăманнисем нумайĕшĕ куна хирĕç те пулĕç; вĕсем малашне хăйсене пулас пысăк усăшăн, халђхи вăхăтра пĕђĕк çеç тăкаксем те тăвасшăн пулмĕç. Çавăнпа пуринђен малтан çак ĕçре комуниссемпе комсомолĕссен хăйсен ĕçĕпе пример кăтартса памалла. Анђах пирĕн ђас-ђасах урăхла та пулкалаť.

## Найан, лўппер ан пул!

Сăмахран çакăн пек пример илĕпĕр: комсомолĕсăн пĕр-пĕр ĕçпе йађейккă пўроне каймалла пулаť, анђах вăл çакăнта хăйĕн маçтĕрĕнђен ыйтаť те пĕр çур сехетлĕхе ĕçленĕ вăхăтрах тухса кайаť. Паллах ĕнтĕ, комсомолĕссем çавăн пек ĕçлесессĕн, вĕсем вара парттире тăманнисем хушшинђе ĕç ăнаçупе вăйлăлăхне хăпартас тĕлĕшпе нимĕнле акиттатси тума та пултараймаççĕ. Вара пирĕн комуниссен парттин йышăнăвĕсем пурăнăçа кĕреймеççĕ, мĕншĕн тесен, парттире тăманнисем пирĕн çине ўркенекенсем, лўпперсем çине пăхнă пек çеç пăхма пуçлаççĕ. Çавăнпа комсомолĕсăн парттире тăманнисемшĕн «пример» пулмалла.

## Мĕнле вĕренмелле?

Çакăнта калани, вăл ĕç ăнăçуне вăйлăлатас тĕлĕшрен çеç мар, вăл ытти ĕçсемшĕн

те, сӑмахран фапсавуҫра йе тата урӑх шкулсенҫе вӗренессипӗн те тӗрӗс сӑмах пулса тӑрат. Нумайӗшӗ комсомолӗссем шкулсенҫе сойусра тӑманнисенҫен наҫартарах, вӗренесҫӗ. Ку сийен пирӗн комсомолӗссем хӑйсем ҫине нумай тӗрлӗ ӗҫсем илнипе, комсомол ӗҫне вӗренессипе пӗрлештерейместӗр, шкулта лайӑх вӗренмеллине манса кайнинҫен килет. Ҫӑнахах та, комсомолӗсӑн тӗрлӗ опшҫӑства ӗҫӗсене парттире тӑманнисенҫен нумайрах туса пымалла, политтӗк тӗлӗшӗнҫен вӗренесси ҫине те, комсомол опесӑннӑҫӗсене пурӑнӑҫа кӳртмете, ытларах вӑйне памалла, анҫах ку ӗҫе унӑн, хӑйӗн тӗп происвотствӑри ӗҫне, йе фапсавуҫра вӗренес ӗҫне ҫармалла туса пымалла мар. Комсомолӗсӑн происвотствӑра та фапсавуҫӑра вӗреннӗ ҫӗрте те парттире тӑманнисемшӗн примерлӑ пулса тӑмалла.

**Тапак ан турт, ерех-сӑра ан ӗҫ, ан вӑрҫ!**

Комсомолӗсӑн ӗҫме, вӑрҫма тата тапак туртма йурамаст тенӗ ҫух, ӑна тапак туртнипе, ӗҫнипе ҫыннӑн сывӑлӑхӗшӗн сийенлӗ тесе ҫеҫ ӑнлантармалла мар.

Устав ҫине комсомолӗссене ӗҫме, вӑрҫма ҫарнине пӗр йенҫен — пирӗн комсомолӗссем

сойусра тăман çамрăксемшĕн примерлă пулђ-ђăр тесе, тепĕр йенђен хăйсен ĕçĕсене тĕрĕс, лайăх туса пыђђăр—тесе кўртсе хунă.

Сăмахран калăпăр: комсомолĕс ђас-ђасах вăрçаť пулсассăн, унăн парттире тăманнисен хушшинђе нимĕн хисепĕ те пулмасť, çавăнпа вăл вĕсен хушшинђе акиттатсилеме те пултараймасť. Тата вăл ђас-ђасах ĕçет пулсассăн. вара вăл парттире тăманнисен умĕнђе пĕтĕм комсомол хисепне (авторитетне) пĕтерет, тата çав сийен комсомолĕса хăйĕн тĕп ĕçне туса пыма та ђарса тăраť. Унăн пуçĕ ĕçмен çыннăнни пек ĕçлеме пултараймасť, вăл хăйĕн тумалли ĕçĕсене те манма пуçлаť, тулкăсăр, ашкăнса çўреме пуçлаť. Акă мĕншĕн комсомолĕссем çак кивĕ пурнăçран йулнă сийенсемпе: ерех ĕçессипе, вăрçассипе, тата тапак туртассипе хытă кĕрешеççĕ.

### Кивĕ йăласем çинђен.

Парттире тăман çамрăксем те ваттисемшĕн, пур йенђен те примерлă пуласси, вăл халђхи пурăнăçра пирĕншĕн çăмăл йапалах мар, мĕншĕн тесен, пирĕн хушăра кивĕ, усал йăласем хытă, тымар йарсах лараççĕ. Сăмахран, нумайĕшĕ çамрăксем пĕђĕкренпех турт-

ма, йе ĕçме вĕреннĕ, мĕншĕн тесен, вĕсен ашшĕ-амăшĕсем тата вĕсен аслашшĕсем тапак туртнă, ерех-сăра ĕçнĕ. Çак кивĕ йăласенҫен хăтăлассипçăмăлах мар. Вĕсене пĕтерме епир, çав сийенсемпе пур комсомолĕссем те çыхăнса, пĕрлешсе, çапăçсассăн, тата пурте çав сийенсене хирĕç кăр тăрсан кăна пĕтерме пултаратпăр.

**Кивĕ пурăнăç йĕркисемпе комсомол йепле кĕрешет.**

Епир комсомолра тĕрлĕ «каçсем» туса иртеретпĕр. Ку «каçсене» епир сойусра тăман çамрăксем тăвакан шухă ташшисем, тата ытти савăнăçĕсем вырăнне туса иртеретпĕр. Тата комсомолра епир спорт ĕçне вĕренетпĕр. Çавă вара пирĕн сойусра тăман çамрăксен тĕрлĕ усал, шухă савăнăçĕсем вырăнне йышăнса тăрат, сăмахран каласан, вăл тĕрлĕ савăтри, йе йалти çамрăксен хушшинҫи çапăçусемпе, вăрçăсен вырăнне пулат. Çамрăксене нумайĕшне комсомолĕссем иртерекен каçсемпе, унта пулакан вăйăсем тата епир çак çамрăксене хамăрăн халăхлă ĕçсене йавăçтарни, вĕсене çак кивĕ усал йăласенҫен сивĕнтерсе, комсомол йенелле çавăрҫĕç. Кивĕ йăласем пирĕн питĕ нумай, çавăнпа çамрăкăн

комсомола кӗрсессӗн ҫак усал йӑласене: вӑрҫасине, ӗҫессине, тапак туртассине тата, малта кӑтартман, тепӗр сийене—хӗрарӑма йулташ вырӑнне хуманнине, пӗтерме вӗсенҫен хӑтӑлма тӑрӑшмалла. Ҫакна тумасассӑн, унтан малашне йурӑхлӑ комунис пулма пултараймасҭ. Тата ҫас-ҫасах ҫамрӑк аван пулаҭ, анҫах вырӑнсӑр калаҫаканскер пулаҭ (кӑна вырӑсла «бузотер» теҫҫӗ, ҫӑвашла «ҫапкаланҫӑк» теме йураҭ). Ҫак ҫамрӑка комсомолта аван ӗҫ парсассӑн, унтан вара ҫи лайӑх йулташ, лайӑх ӗҫлекен, лайӑх комунис пулаҭ, анҫах ӗҫе йавӑҫтармасассӑн, унтан асса, ашкӑнса ҫӳрекен ҫын кӑна пулаҭ. Ҫавӑн пек ҫамрӑксем нумайӗшӗ комсомолра хӑйсене хӑйсем астуса тӳрленҫӗҫ. Пирӗн оркатисатси те ҫавӑн пек тума, наҫар ҫамрӑксенҫен лайӑх, йурӑхлӑ комуниссем тума тӑрӑшаҭ. Вӑл (оркаписатси) ҫак тӗлӗшрен ҫамрӑксен хушшинҫе пур сийенсемпе кӗрешет. Кӗрешессине сойусран кӑларнипе ҫеҫ мар, малтан тӗрлӗ вӗрентсе ӳстерес майӗсемпе кӗрешет, анҫах вӑл та пулӑшмасассӑн вара тин сойусран кӑларса пӑрахаҭ.

## Сойусран кăларасси çинҫен.

Пирĕн сойусра нумайĕшĕ косомолĕссем айăплă комсомолĕсą кашнинех сойусран кăларса пăрахма йураҭ тесе шухăшлаççĕ. Анҫах вăл тĕрĕс мар. Партти ҫленĕшĕн парттирен кăларни ҫи пысăк айăпа тӳсни (накасани) пулаҭ, çавăн пекех комсомолĕса та комсомолран кăларни, унпăн ҫи пысăк айăпа тӳсни пулаҭ. Çавна пурин те асра тытса тăмалла. Çак айăпа тӳснине (сойусран кăларассине), комсомол хăйĕн ҫленне ытти майсемпе тӳрлетеймесессĕн анҫах параҭ. Комсомолĕс нимĕнле ытти майсемпе те тӳрленмест: вăл тӳрленесшĕн мар, йе тӳрленме те пултараймасҭ пулсассăн, вара ку çамрăк валли вăл ытти комсомолĕсçене те ан пăстăр тесе, комсомолран кăларассисĕр пуçне урăх нимĕн те йулмасҭ. Анҫах комсомол пуринҫен питрех, ĕçлекен çамрăксене сойусран кăларас ĕçе питĕ майĕпе, тĕплĕ шухăшласа тăваҭ.

## Парттине кĕме хатĕрлен!

Акă ĕнтĕ есĕ комсомола çитĕнсе çитсен кĕретĕн. Сойуса тата 19-20-21 çулти çамрăксем те кĕреççĕ. Вăхăт çитсен, санăн парттине кĕмелле. Кашни комсомолĕс сойуса кĕрсен, хăйĕн пуçĕнҫе парттине хăш вăхăтра

кӗрессине шухӑшласа хумалла та, вара унта кӗме хатӗрленме пуҫламалла. Тата пӗрмайах парттине кӗме вӑхӑт ҫитиҙҙен, сойусра тӑнӑ ҙух, санӑн парттине кӗме йепле хатӗрленессине, мӗнле ӗҫре ӗҫлессине, мӗнле крушоксенҙе вӗренессине, мӗнле кӗнекесем вуласа тухассине, тата сана парттине кӗме комсомол йаҙейкки шанҙӑклине пӗлтерекен хут патӑр тесессӗн, санӑн мӗн тумаллине—пурне те асра тытса, ху пуҫӑнта пӗҙӗк ӗҫ йӗркийӗ пек план тытса тӑмалла. Ҫамрӑксем 20 ҫула ҫитиҙҙен пирӗн парттине комсомол урлӑ ҫеҫ кӗресҫӗ. Ҫавӑн пек ҫамрӑксене парттине кӗме комсомол шантарӑвӗ кирлӗ. Ҫавӑнпа комсомол йаҙейкки санӑн ӗҫе курса, сана лайӑх пӗлсе парттине кӗме шантару патӑр тесессӗн, санӑн комсомолра хӑна йепле тытасси ҫинҙен, тата комсомолӑн ӗҫне йепле тӑвасси ҫинҙен нумай шухӑшламалла.

**Комсомолӗсран парттире тӑманнисенҙен ытларах ыйтаҫҫӗ.**

Парттине кӗрекен комсомолӗссем хӑш ҙухне, мӗншӗн комсомолӗсран парттине кӗнӗ ҙух пур йенҙен те, парттире тӑманнисенҙен ытларах ыйтаҫҫӗ: комсомолӗса пӗлни те нумайтарах кирлӗ, вӑл хӑйне хӑй пур йенҙен

авантарах тытни те кирлĕ—теççĕ. Çавăн ђухнех çитĕннĕ ĕçлекенсенђен нимех те ыйтмаççĕ те, тата вĕсене ђасрах та илеççĕ. Çавсене хирĕç ак мĕн каламалла. Пĕр йенђен çитĕннĕ, ватăрах ĕçлекен пирĕн пек комсомол шкулĕ витĕр тухман. Комсомолĕсăн парттин йурăхлă ђленĕсене хатĕрлекен орканисатси пур пирки, орканисатсинђи çамрăксен парттире тăман ĕçлекенсенђен нумайтарах хатĕрленмелле, парттине питрех йурăхлă пулмалла, тата хăйсене хăйсем пур йенђен те аван тытса тăрасси те вĕсене кирлĕ. Комсомол орканисатсийĕ çавăнпа та кирли паллах ĕнтĕ. Кун пек пулсассăн, комсомолĕссенђен парттине кĕнĕ ђух ытларах ыйтма кирли те, паллах. Тĕпĕр йенђен çитĕннĕ, ватăрах ĕçлекенсен комсомолĕссенђен уйăрăмлăхĕ çакă пур: вĕсем нумайĕшĕ патшапа, револђутсиђђенех, хытă кĕрешсе, çак кĕрешў шкулĕ витĕр тухнă. Вĕсенђен нумайĕшĕ парттире тăмасассăн та, тĕрлĕ пăлханусенђе çапăçнă, тата хăйсен хуçисемпе те економиккăпа политтĕккăллă кĕрешўсенђе çапăçнă пирки, вĕсем хăйсене хĕртсе çирĕплетнĕ. Çамрăксем çак йенђен патша пусмăрлăхĕсене лайăххăн курайман, мĕншĕн тесессĕн, нумайĕшĕ вĕсен-

ҫен канаш ирӗкӗ пуҫланнӑранпа ҫеҫ ӗҫлеме пуҫланӑ, краштан вӑрҫи витӗр те пиҫсе тухайман, тата парттине кӗнӗ, йе тин ҫеҫ кӗрекен ӗҫлекенсем, вӗсем нумайӗшӗ краштан вӑрҫинҫе пулса, хӗрлӗ ҫар шкулӗ витӗр тухса, хӑйсене, комунисӑм ӗҫӗсемшӗн, шухӑшӗсемшӗн кӗрешес тӗлӗшрен, хытӑ ҫирӗпленнӗ. Ҫавӑнпа ҫамрӑксен ҫитӗннӗ, ватӑрах ӗҫлекенсенни пек пролеттари класӗн интересӗсемшӗн кӗрешес йенҫен ҫирӗпленни ҫукрах. Ҫавӑнпа ҫамрӑксем ваттисенҫен ытларах йӑнӑшсем тума та пултараҫҫӗ. Ҫакӑн пек йӑнӑшсем тӑвас мар тесессӗн, йурӑхлӑ комунис пулас тесессӗн, ҫамрӑксен хӑйсен комсомол орканисатсинҫе малалла ӗҫлеме вӗренӳ тӗлӗшӗнҫен те, ӗҫ пӗлни тӗлӗшӗнҫен те нумай хатӗрленмелле.

Акӑ мӗншӗн парттине кӗнӗ ҫух, комсомолӗссенҫен, пур йенҫен те, парттире тӑман ӗҫлекенсенҫен нумайтарах ыйтаҫҫӗ. Комсомолра тӑратӑн пулсассӑн, санӑн 2—3 ҫул хушшинҫе, унта ӗҫлесе, хӑна парттине кӗме хастарлӑ, йурӑхлӑ, ӗҫхалӑхӗ ӗҫӗшӗн хытӑ кӗрешекен комунис пулма хатӗрлемелле. Ҫавӑнпа есӗ комсомол орканисатсинҫе тӑратӑн.

ХАКĔ 15 ПУС